Ыран – Амăшĕсен кунĕ

# Çĕнĕлĕхсем – амăшĕсене те, ачисене те

***Ача амăшĕ пулма нихăш вăхăтра та çăмăл пулман. Анчах юлашки çулсенче патшалăх енчен ача амăшĕн, çемье тата ача ыйтăвĕсене татса парассипе çăмăллăхсем сахал мар. Çăмăллăхсемпе тивĕçтерессинче çĕнĕлĕхсем те пурнăçа кĕрсе пыраççĕ. Шăпах вĕсем пирки каласа пама районти хӳтлĕх пайĕн ертӳçине Нина Пантелеевна ПЕТРОВАНА ыйтрăмăр.***

**– Юлашки вăхăтра çынсем «амăш капиталĕ» пирки ытларах калаçаççĕ. Пирĕн районта та ăна тивĕçнисем 344 çын ĕнтĕ. Ача амăшĕсене çăмăллăхсем парассинче паянхи кун тата мĕнле çĕнĕлĕхсем пур?**

– Тӳрех каламалла, ача çуратнăшăн, ăна çулталăк çурă хушши пăхнăшăн, çавăн пекех ачасене паракан пособисем çултан-çул ӳсеççĕ. Кăçал та июнĕн 27-мĕшĕнче Чăваш Республикин «Ача пур граждансене патшалăх пособийĕсем парасси çинчен» саккуна улшăнусем кĕртессине йышăннă. Çавна май пособи виçисем те ӳсрĕç. Ача çуратнăшăн пĕр хут паракан пособи паян 8840 тенкĕ 58 пус. Паллах, ачасемшĕн паракан пособи калăпăшĕ çемьере миçе ача пулнинчен тата çемье тупăшĕнчен те килет. Ачасем нумайрах – пособисем те пысăкрах.

2007 çулхи декабрĕн 29-мĕшĕнче Раççей Правительстви йышăннă 948 № Постановленире килĕшӳллĕн халĕ хĕсметре тăракан арçыннăн мăшăрĕ ача çуратнăшăн пĕр хут паракан пособие тивĕçет. Унăн калăпăшĕ 14000 тенкĕ. Унсăр пуçне ачишĕн уйăхсерен 6000 тенкĕпе танлашакан пособи те илет.

**– Çак çĕнĕлĕхпе пирĕн районта усă куракансем пур-и?**

– Пĕр çамрăк амăшĕ унпа кĕçех усă курма пуçлĕ. Çакăнтах ачана 1 çулччен кăкăр çитерекен амăшĕсене тата çие юлнă хĕрарăмсене (12 эрнерен тытăнса) врач справкисемпе килĕшӳллĕн уйăхсерен 100 тенкĕ компенсаци параççĕ. 2 çултан пуçласа 3 çулччен ачасен апатланăвне туллинрех тăвас тесе кашни уйăхра 70 тенкĕ компенсаци илме пулать, анчах ку ача сачĕсене çӳремен ачасем çине сарăлать.

**– Ача садике çӳрет пулсан, мĕнле çăмăллăхсем пур?**

– Ача садне çӳрекенсен те çăмăллăхсем пур. Ашшĕ-амăшĕ ачана садикре усранăшăн тӳлекен укçан пĕр пайĕ вĕсем патнех таврăнать. Пĕрремĕш ачашăн – 20%, иккĕмĕш ачашăн – 50%, виççĕмĕш ачашăн – 70% таранах.

**– Çĕр-шывра та, республикăра та юлашки вăхăтра тăлăх ачасене интернатсенче мар, çемьесенче воспитани парассишĕн тăрăшма пуçлани сисĕнет. Пирĕн районта ку енĕпе мĕнлерех лару-тăру?**

– Тăлăх ачасем çине патшалăх тимлĕх уйăрни савăнтарать. Тăлăх ачасене паракан пособи виçи те ӳсрĕ. Çемьене тăлăх ачана пăхма илнĕшĕн амăшне е ашшĕне те ĕç укçи тӳлеççĕ. Паян районта 10 çемье пурĕ 14 ачана пăхма илнĕ. 60 ача 53 çемьере опекăра. Пурне те тĕрлĕ çăмăллăхсем тивĕçеççĕ: пособисен виçи ача шучĕпе тата вĕсем миçе çулта пулнипе çыхăннă.

**Н. НИКОЛАЕВА**
**калаçнă.**

Район судĕнчен

## Поручитель пуласси – яваплă утăм



Юлашки вăхăтра кредит паракан банксемпе кооперативсем час-часах Муркаш район судне кредит илекенсемпе тата поручительсемпе тунă килĕшӳсем тăрăх парăмсене шыраса илме искпем ыйтса çыраççĕ. Çакă вĕсен парăмçисем хăйсен тивĕçне пурнăçламаннипе çыхăннă. Килĕшӳсем çине алă пуснă-çке, апла пулсан тивĕçсене пурнăçламалла.

Килĕшӳсенче поручительсен мĕнле лару-тăрура укçана хăйсен тӳлемелли çинчен те ăнланмаллах çырса панă. Шăпах çав лару-тăру сиксе тухсан вара пуçа хыçма пуçлатпăр. Апла пулсан шанчăксăр çыннăнне мĕншĕн поручитель пулмалла? Кун пирки малтанах тĕплĕн шутласа утăм тумалла пулĕ. Кредит илекен парăма тӳлесе пымасть пулсан, поручительсен хăйсен тӳлемелле пулса тухать.

Сăмахран, Муркаш район судĕ Светлана Хасинбиевна Григорьева кредит парăмне татса пымамни пирки ĕç пăхса тухрĕ. Саккунпа килĕшӳллĕн парăма татас ĕçе ун поручителĕсене те явăçтармалла турĕ.

Тĕрлĕ вырăнсенчен кредит илнĕ Алиса Валериановна Вязова, Вероника Леонидовна Егорова та банксен умĕнчи тивĕçĕсене пурнăçламан. Суд асăннă çынсен ĕçĕсене пăхса тухнă чухне вара вĕсем нихăшĕ те суда пĕр хут та килмерĕç. Вĕсемшĕн те халĕ поручительсен укçа тӳлеççĕ.

Кун пек иск заявленийĕсем нумайлансах пыраççĕ. Çавăнпа та малашне поручительсене çăмăлтай утăмсем тумалла мар тесе калас килет. Ĕç суда çитсен тин поручительсем хăйсен тăванĕсемпе юлташĕсене пулăшни еплерех çаврăнса тухма пултарнине ăнланса илеççĕ. Кредит договорĕсемпе малтанах тĕплĕн паллашмалла, çав тери тимлĕн вуласа тухмалла. Кайран саккунсене пĕлменни çине тайăнмалла мар. Саккуна пĕлменни явапләхран хăтармасть.

**Э. ВОЛКОВ,**
**Муркаш район судĕн судйи.**

Милици хроникинчен

## Алран алла – суя укçа

Суя укçа саракансем хăйсен киревсĕр ĕçне халăх йышлă пулакан вырăнсенче тĕттĕмленсен, клиентсенчен укçа йышăннă чухне кассирсемпе сутуçăсен тимлĕхĕ чакнă вăхăтра тума тăрăшаççĕ. Ултавлă укçа çынсенче çӳрени пирĕн район витĕр федераллă трасса иртнипе те çыхăннă.

Çапла Муркаш каччи Калайкассинчи автозаправкăра бензиншăн хăй пĕлмесĕрех 500 тенкĕлĕх суя укçа тӳлет. Ку хута ăна Москакассинчен Шупашкара лартса кайма килĕшнĕшĕн пĕр çăмăлттай хĕр панă иккен. Хĕр вара çак «укçана» КамАЗ водителĕнчен илнĕ. Интим услугисемшĕн. Машина номерне вăл астумасть, водительне – пушшех те.

Юрать-ха, бензин кирлĕ пулнă. Атту çак укçапа çыхăннă çынсен шучĕ вĕçĕ-хĕррисĕр пулĕччĕ. Халĕ вара вĕсен шутне уголовнăй ĕçĕн татса памалла.

## «Мана укçа кирлĕ!»

Çапла виçĕ уйăх хушши укçа ыйтса, хăратса пурăннă вăтăрхи иртнĕ Нискасси арçынĕ хăйĕнчен вунă çул ытла кĕçĕн çамрăка. 20000 тенкĕ кирлĕ пулнă иккен ăна. Çав çула çитсен те укçа ĕçлесе илме вара пӳтсĕрĕн ăсĕ çитеймен. Çăмăллăн пурăнма хăнăхнă вăй питти çыннăн пĕр çăмаха виçĕ уйăх хушши каласа чĕлхи еплеывăнчĕ пуль! Халĕ ăна кантарма тинех вăхăчĕ çитнĕ. Малта – РФ Уголовнăй Кодексăн 168 статйипе уголовнăй ĕç пуçарасси.

## К сведению абонентов ОАО «ВолгаТелеком» в Моргаушском районе!

С 1 декабря 2008 года в Моргаушском районе вводятся в действие три тарифных плана по оплате услуг местной телефонной связи.

До 20 декабря вам необходимо выбрать тарифный план, по которому вы будете в дальнейшем оплачивать телефонные звонки по и району: с повременной, абонентской или комбинированной системой оплаты.

При выборе повременного тарифного плана вы будете оплачивать каждую минуту местных телефонных соединений. Расходы на услуги местной телефонной связи, таким образом, будут зависеть от количества и продолжительности переговоров. При выборе абонентского тарифного плана Вы по-прежнему сможете пользоваться местной телефонной связью неограниченно за фиксированную ежемесячную плату.

При выборе комбинированного тарифного плана Вам будет предоставлен базовый объем местных телефонных соединений в размере 360 минут в месяц за фиксированную ежемесячную плату, каждая минута местных соединений сверх 360 минут будет оплачиваться дополнительно.

Все тарифные планы включают также ежемесячную плату за предоставление абоненту в постоянное пользование абонентской линии.

Стоимость услуг местной телефонной связи на каждом тарифном плане для сельского населения и юридических лиц вы можете узнать в обслуживающих вас отделениях электросвязи, по телефону корпоративной справочной службы 8-141, на Интернет-сайте www.chr.vt.ru. Подробная информация о тарифах и порядке выбора тарифного плана будет приведена на обратной стороне дополнительных соглашений к договору об оказании услуг телефонной связи и в специальных информационных листовках. Справки юридическим лицам предоставляются также по телефону 8-835-2-62-40-50.

Абоненты-граждане, телефоны которых поддерживают режим тонального набора, могут выбрать тарифный план с помощью звонка на круглосуточный бесплатный сервисный номер 8-835-2-35-35-35. Переход в тональный режим осуществляется с «кнопочных» телефонов путем нажатия клавиши «*» или установки специального переключателя «Т/Р» в положение «Т». Для выбора тарифного плана позвоните со своего домашнего телефона на номер 8-835-2-35-35-35, внимательно прослушайте сообщение автоинформатора, переведите телефон в тональный режим и после звукового сигнала нажмите кнопку, соответствующую выбранному вами тарифному плану: с повременной системой оплаты – «1», с абонентской системой оплаты – «2», с комбинированной системой оплаты – «3». Обязательно дождитесь сообщения автоинформатора о том, что ваша заявка принята. Внимание: сервис не предоставляется с телефонных номеров, у которых закрыт выход на междугородную и внутризоновую связь (на код «8»).

Гражданам-владельцам дисковых телефонных аппаратов, не поддерживающих режим тонального набора, или не имеющим выхода на «8», а также юридическим лицам для выбора тарифного плана следует обратиться в Моргаушский ЛТУ филиала в Чувашской Республике ОАО «ВолгаТелеком» по адресу: ул. Мира, 6 (режим работы ежедневно с 8 до 20 часов, тел.2-12-53, 2-22-60) и подписать дополнительное соглашение к договору на оказание услуг связи.

Выбрать свой тарифный план и заключить дополнительное соглашение следует до 20 декабря 2008 года. В этом случае оплата услуг связи, начиная с декабря 2008 г. будет производиться в соответствии с выбранным тарифным планом. Если Вы не определитесь с выбором тарифного плана до 20 декабря, плата за услуги местной телефонной связи Вам будет начисляться по абонентской системе.

Лиц. № 23245 МС РФ.

## Пĕлтерӳсем. Объявления

Министерство экономического развития и торговли Чувашской Республики в рамках проведения административной реформы в Чувашской Республике объявляет о социологическом опросе населения о качестве предоставляемых муниципальными учреждениями городских округов и муниципальных районов бюджетных услуг.

Опрос проводится для оценки эффективности деятельности органов местного самоуправления городских округов и муниципальных районов Чувашской Республики.

Социологический опрос населения назначен на декабрь 2008 г. и будет включать вопросы удовлетворенности населения медицинской помощью, качеством дошкольного образования детей, качеством дополнительного образования детей, деятельностью органов местного самоуправления городского округа (муниципального района), в том числе их информационной открытостью и удовлетворенностью населения качеством предоставляемых услуг в сфере культуры.


**Продаю автомашину ВАЗ-21124 2005 года выпуска, цвет капри, пробег 60000 км. Тел.: 8-927-860-69-47. 1-2.**

**Лашапа сухаламалли пĕр касăллă плуг сутатпăр. Тел.: 60-0-34.**

**Çамрăк ĕне илетĕп. Тел.: 8-927-865-41-24.**

**Грузоперевозки на автомашине ГАЗ-33104 «Валдай». Грузоподъемность до 6 тонн, длина кузова 6 метров. Тел.: 8-927-842-29-00, 8-906-131-36-39.**

**Аттестат о среднем образовании, выданный 23 июня 2001 года Моргаушской СОШ на имя Толикиной Татьяны Владимировны, считать недействительным.**

**Халăхран лайăх хакпа ĕне, тына, вăкăр ашăн тата чĕрĕ виçепе туянатпăр. Тел.: 60-7-10, 8-905-343-60-63. 4-4.**

**ООО «Жилкомсервис» сообщает, что задолженность населения за пользование водой на 1 ноября 2008 года составляет 367 тыс. руб., в том числе:**
**по Б. Сундырскому СП – 110 тыс. руб.;**
**по Кадикасинскому СП – 165 тыс. руб.;**
**по Юнгинскому СП – 79 тыс. руб.;**
**по Москакасинскому СП – 14 тыс. руб.**
**Несвоевременная оплата приводит к сбоям водоснабжения населения. Просим оплатить задолженность до 1 декабря 2008 года. В случае неоплаты ООО «Жилкомсервис» будет вынуждено начислить пени и прекратить подачу воды.**
**Администрация ООО «Жилкомсервис».**



*Теперь можно купить и в Моргаушах*
**Здание «СЕЛЬХОЗТЕХНИКИ», 2 эт**
*+ ПОДАРОК от Деда Мороза*
**Тел.: 29-80-60**
**Тел.: 8-927-669-80-60**

**КПКГ «Заря-Кредит» принимает сбережения от пайщиков на выгодных условиях по адресу: остановка Москакасы, здание «Автомиг», 2 этаж. Тел.: 66-2-16, 8-937-370-23-69. 2-11.**

**Индивидуальному предпринимателю Вязову Андрею Николаевичу требуется маляр мебельного производства. Зарплата высокая. Звонить по тел.: 2-25-74 с 8.00 до 17.00. 5-5.**

**ИП Ершов А.В. делает на заказ банные печи любой формы, а также гаражные, уличные ворота. Продает угольники, швеллера, трубы на забор и ворота. Доставка. Обращаться по тел.: 8-919-655-21-51 (Моргауши, плодокомбинат). 5-5.**

Мир окон и дверей
**ОКНА пластиковые**
от ведущего производителя
Чувашии теперь... в МОРГАУШАХ
Здание "СЕЛЬХОЗТЕХНИКА", 2эт
**29-80-60 8-927-669-80-60**
*Набор по уходу за окнами и москитная сетка – в подарок! Скидка до 25 %.*

**Продаю кирпич: красный одинарный М-100, М-125, М-150, красный полуторный пустотный М-125, силикатный, КББ 20х20х40, керамзит, гравмассу, кирпич половняк. Доставка. Документы. Тел.: 8-903-358-20-97. 5-9.**

**Спутниковые антенны ТРИКОЛОР с установкой, регистрацией и обслуживанием. Тел.: 8-905-345-77-19. 10-10.**

**КПКГ «Агрокредит» принимает сбережения от пайщиков, выдает займы пайщикам. Ждем вас по адресу: с. Моргауши, ул. 50 лет Октября, д. 4. Тел.: 2-18-13, 8-927-995-03-41. 11-13.**

**Спутниковое телевидение от 3500 рублей, тел.: 8-927-666-93-95. Спутниковый интернет. 9-20.**


Уйкас Янасал ял администрацийĕ ял тăрăхĕнчи депутатсен Пухăвĕн депутачĕ, вырăнти ĕçпе вăрçă ветеранĕсен канашĕн председателĕ пулса ĕçленĕ

**Александр Иванович ИВАНОВ**

вилсе кайнă пирки çемйипе тата тăванĕсемпе пĕрле чĕререн хурланса пĕлтерет.


Моргаушская районная газета «Çĕнтерӳ ялавĕ»

УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
Государственное унитарное предприятие Чувашской Республики "Моргаушский издательский дом".

Главный редактор А.И. ТИХОНОВ.
АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9.
ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 2-11-36, заместитель главного редактора - 2-12-82, бухгалтерия - 2-11-35, отделы: общественно-политической жизни - 2-12-82, экономики - 2-11-38. Факс: 2-11-36; E-mail: morpress@cbx.ru

Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу.
Свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ФС 18-2329 от 15 августа 2005 года.

Объем 2 усл. печатных листа.
Рукописи не рецензируются и не возвращаются, объемом более 2 стр. не принимаются.
Редакция не несет ответственности за содержание рекламных объявлений.

ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.
Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.
Шапошников В.Л.
Номер подписан 21.11.2008 г.
Время подписания в печать: по графику – 17 час. 20 мин, фактическое – 17 час. 20 мин.
Заказ Тираж 3608.

Номер набран и сверстан в ГУП "Моргаушский издательский дом", отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.